К С (Чув)
К96
30151-чув

Николай Кушманов

Кунçул ытамĕнче

Чăваш кĕнеке издательстви

Национальная библиотека ЧР
4-030151
30151 чув

Возвратить книгу не позже
обозначенного здесь срока

Зак. 4135.

Николай Кушманов

Кунҫул ытамӗнче

Сӑвӑсем

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
1987

ББҪ 84. Чув 7—5
Ҫ 96

ПРОВЕРЕНО
2010

30151-чув.

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

Кушманов Н. К.

Ҫ 96 Кунҫул ытамӗнче. Сӑвӑсем.—Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1987.—47 с.

5 п., 1000 экз.

Николай Кушманов сӑввисем вулакансене шухӑшкӑмӑл тасалӑхӗпе илӗртеҫҫӗ. Ҫалас тенине ҫамрӑк сӑвӑҫ хӑлаҫланмасӑр, кӑшкӑрашмасӑр, сӑпайлӑн та лӑпкӑн калать. «Кунҫул ытамӗнче»—авторӑн пӗрремӗш кӗнеки.

ББҪ 84. Чув 7—5

Ҫ $\frac{4803010200-044}{М\ 136\ (03)-87}$ 81—87

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1987 ҫ.

* * *

Пурнатпăр ирĕк çĕршывра телейлĕн.
Ӑалатпăр уççăн: сыншăн çын—тăван.
Ӗçчен этем мала пăхать тĕллевлĕн,
Мире, хăйĕн çĕрне савать чунтан.

Анчах та лăпкă мар-ха пур çĕрте те,
Унта-кунта сиксе тухать пушар.
Усал вăйсем чĕрчунсене, çĕре те,
Этемлĕхе те кăтартасшăн шар.

Эппин, пирте ан сӳнтĕр сыхă ĕмĕт:
Тăван çĕре ялан куç пек упрар.
Ачамăрсен те пултăр вăрăм ĕмĕр,
Çак тĕллеве куллен асра тытар.

Халь эп те, эс те миршĕн кар тăрсан,
Тĕнчемĕр пулĕ лăпкăрах ыран.

* * *

Ҫашни пӗлет аван: ҫӗршыв мӑнаҫлӑ,
Илем тени таҫта та пур тӗнчен.
Ҫазах ҫыннин, ав, уйӗ-хирӗ аслӑ,
Ҫанталӑк ырӑрах Кавказ енче.

Ҫапах та эпӗ пурпӗр юрататӑп,
Ҫырма-ҫатраллӑ Чӑвашьен, сана.
Ҫунта хама телейлӗрех туятӑп,
Ҫунта вӗҫевлӗрех ман чун-ҫунат.

Ҫирек ӑҫта пулсан та, ӑмӑрткайӑк
Тупать часах ҫуралнӑ йӑвине.
Этем те ҫавнашкал — таҫта та кайӗ,
Анчах та манмӗ вӑл тӑван килне.

Хӗрӳ чӗре пурӑнаймасть тапмасӑр,
Чӑн-чӑн этем — хӑй ҫӗршывне савмасӑр.

* * *

Ытарайми,
Нихҫан манми Чӑваш ҫӗршывӗ!
Сӑпайлӑн,
Шӑппӑн юрататӑп эп сана.
Ҫӑтра вӑрман, сар хирӳсем чӗремшӗн ҫывӑх,
Ҫирек хӑҫан хапӑлласа кӗтен мана.

Атте-аннен,
Чи ҫывӑх ҫыннӑмсен ҫӗршывӗ,
Сивве, терте—
Пурне те чӑтнӑ эс пайтах.
Пурнӑҫӑмра ман пулас марччӗ саншӑн хывӑх,
Ман пулас марччӗ саншӑн кивӗ, пуш сӑмах...

* * *

— Пĕлтер, этем, кунçул юхăмĕнче
Ăçта чее тăшман эс курнă?
Ăçта эс тус яланлăх тупнă?
— Ырăлăхпа хаярлăх хушшинче.

— Хăв иртнĕ çул-йĕрӳн чăтлăхĕнче
Ăçта ĕмĕтӳпе йăпаннă,
Вăйна çухатнă, хастарланнă?
— Ырăлăхпа хаярлăх хушшинче.

— Васкавлă вăхăт урапи çинче
Мĕне хаклатăн, кăмăллатăн?
Виличченех ăçта пулатăн?
— Ырăлăхпа хаярлăх хушшинче!

* * *

Тĕллев! Малашлăхпа эс йĕкĕреш-тĕр:
Чĕнетĕн, çăлтăр пек çиçсе, инçе.
Ыр ĕçшĕн çынсене кĕрештеретĕн,
Ан пултăр хурлăх нихăçан тесе.

* * *

— Ирсерен кама кĕтетĕн эс, йăмра?
— Сан аслаçуна, вăл лартнăччĕ мана.
— Килес çук нихçан вăл: вилнĕ вăрçăра.
— Пурĕпĕр кĕтетĕп яланах ăна.

* * *

Куçа суккăрлатакан симĕс çутă,
Шартлатса çурăлни, самантрах—
Вĕри сывлăш хумĕ килсе çапать.
Мĕнпурĕ çунма тытăнать.

(Япони художникĕсем—
Тосикăпа Ири Маруки курни.)

Çын тӳснисем ума тухаççĕ:
Ахлатнă, кăшкăрнă сассем.
Пире-çке асăрхаттараççĕ
Японире чăн пулнисем.

Суккăрлатан сип-симĕс çутă,
Шартлатнă сас, хăруш сăнсем.
Тавралăхра асать вут-çулăм,
Самант... Вилеççĕ-çке çынсем.

Суккăрлатан сип-симĕс çутă,
Пур чĕрлĕхе пĕтерекен.
Ăна пула пĕри пит тутă,
Теприншĕн пурнăç çук иккен.

Тин çеç тырпул ӳсетчĕ селĕм,
Çил хăвалатчĕ хумсене,
Пучахсене сăрланăçемĕн
Хĕвел сапатчĕ çутине.

Кĕрлет хула. Ĕçлет хавассăн
Малашлăха утăмласа.
Самант... Янрать шартлатнă сасă,
Кĕл купи çеç юлать тăрса.

Эй, сутçанталăк! Çĕр-аннемĕр!
Çакна-и пирĕн кĕтмелле?
Санпа чухне кăна пĕртен-пĕр
Кунçул, ача-пăча, телей!

Эппин, тĕп пултăр-им вăрманĕ,
Чĕрчун йăлт пĕттĕр-им ыран?
Кĕллентĕр-им чечен çаранĕ,
Ача ан чуптăр-им çарран?..

Çук! Çук! Пăчлантăр вăрçă-харçă
Çак çĕр çинче яланлăхах.
Эсрелшĕн çын ан пултăр тарçă,
Ун хăйне хăй сыхламаллах.

Тăшман çĕлен пек чашкăрсан та,
Вăрçа мир пурпĕр çĕнтерет.
Ăна ялан сыхлар, тус-тантăш,
Савса хĕвеллĕ çут ире.

* * *

«Телей вăл чĕрĕлĕх кăна»,—
Тееççĕ сарă çулçăсем.
Сенкерлĕхе сăна-сăна
Ўкеççĕ çĕр çине вĕсем.

Пурин те пирĕн канăç çук,
Пĕлместпĕр вилĕм мĕнлине.
Хаваслă ĕмĕт çиçнĕ чух
Ялан кĕтетпĕр ыррине.

Хĕвел вылять, хĕвел кулать.
Аш çил килсе лăпкать чуна.
Телей умра çиçсе чупать,
Чĕнет хăй хыççăн вăл мана.

* * *

Этемлĕх ялан пурăнать кĕрешсе.
Телейшĕн мĕн чухлĕ юхтарнă тар, юн?
Эппин, çĕнелӳ пĕрмай тăтăр çиçсе,
Çĕр çаврăнтăр шиксĕр,васкатăр çĕн Кун.

Анчах Икĕенлĕх пĕтмен, çухалман—
Кивви Çĕннине хирĕç тăрĕ куллен.
Нихçан юрамасть тĕлĕрме-лăпланма,
Этем пурнăçра ырă куртăр тесен.

Чĕртетпĕр садсем, ӳстеретпĕр тырпул—
Çĕршыв вăй пухса мăнаçлантăр тесе.
Кунтан та ырри тата халĕ мĕн пур,
Хастар халăхпа хĕн-хура çĕнтерсен.

Пĕртен-пĕр телей вăл—мала талпăнни,
Хĕвеллĕ тĕллевшĕн хĕрӳллĕн çунни.

* * *

Выртакана çапма хушмаççĕ ĕлĕкрен,
Путакана çăлма вĕрен ачаранах.
Епле ыр сăмахсем, куллен кунах пире
Ăс пană килтисем, çакна хурса чăна.

Анчах та ўснĕçем куратпăр урăхла:
Пĕри савать хăйне, теприн телей—мулра...
Çын пĕлменни нумай, çапла шутла-шутла
Иртеççĕ ыр кунсем, каяççĕ авăра.

Анаталла утма пит çăмăл çав, тăван,
Çўле шав кармашма çитмест хăш чух вăй-хал.
Çапах эпир саватпăр пурте кăмăлтан
Кĕрешўре туптаннă пысăк чăнлăха.
Эппин, ялан мухтав малта пыракана,
Чĕресене кăвар-хĕлхем сапакана!

* * *

Çынсем... Çынсем... Сиртен вăй-хал илетĕп,
Туйса ăс-хакăл хăватне, чапне.
Кунçулăмра ялан пĕлесчĕ тетĕп
Ырра курма, çĕнме чăрмавсене.

Хăш чух эп тилĕ пек «туссем» тупатăп,
Е тĕл пулатăп йĕксĕк чунсене.
Çапах шăпа мĕн пӳрнине чăтатăп,
Шанатăп тӳрĕлĕхĕн ыр вăйне.

Çанталăк шухă тăвăл иртнĕ хыççăн
Хĕвелĕн ырлăхне çеç шаннă пек,
Эп хам та çавнашкал—ман шухăш уçă—
Пурнатăп ирĕк, çутă ĕмĕтпе.
Пĕлеп: ырришĕн çеç этем çунсан,
Ун ĕçĕ харама каймасть нихçан.

* * *

Çывăххине, инçетрине те,
Çăмăллине, йывăррине,
Çĕкленнине те, ӳкнине те
Эпир илетпĕр чун патне.

Çул-йĕр пулсассăн та чăрмавлă,
Çиçсен те шанчăк сахалрах,
Чĕремĕрте пĕтмест хастарлăх,
Утатпăр пурпĕр малаллах.

Хăш чух халсăрланса çитсен те,
Вăй-хал тупатпăр хамăртах.
Çĕнтерĕве шав ĕненсессĕн,
Пире пăраймĕç тĕп çултан...

ТУХТĂРСЕНЕ

В. Е. Волковпа
Н. А. Ефимов тухтăрсене

Сывах чухне йăлт ăнланмастпăр
Пит пархатарлă ĕçĕре,
Чирлетпĕр те вара пире
Сыватасса шанса пурнатпăр.

Сăпайлăх, çынлăх, тараватлăх,
Çынна çунатлă тăвасси,
Инкек килсен, пулăшасси—
Чунра ку сирĕн, çакă хаклă.

Палатăна эсир кĕрсессĕн,
Чĕре хăпартланса тапать,
Усал чире хĕссе çĕнтернĕн,
Шур тум куçа шартса тăрать.

Тӳлек саспа ыйтса пĕлетĕр
Хăçан, епле чирленине.
Қанмасăр ир те каç сиплетĕр,
Телей пиллетĕр çынсене.

Тумхахлă, чыслă ĕçĕрте,
Пĕлетпĕр, шырамастăр канăç.
Çынсемшĕн тăрăшатăр тек,
Паратăр вĕсене çут шанăç.

АННЕНЕ

1

Çулсем иртеççĕ пуйăс евĕр хăвăрт,
Эп çамрăк-ха, анчах эс ватăлан,
Шăп çавăнпа чуна хăш чух пит тăвăр,—
Хĕрарăм шăпине ăнланнăран.

Аннеçĕм, халь епле-ха пурăнатăн?
Эс аякра та, манăн канăç çук,
Шупашкарта пĕччен çӳренĕ чух
Шухăшăмра санпа çеç калаçатăп.

Тăван ялта йăва çавăрманран,
Ытти çынсен ачисем пек пулманшăн
Ӳпкев сăмахĕсем, тен, эс упран,
Анчах ăна пĕрре те палăртмастăн.

Кунçулăма, эп мĕншĕн çуннине
Манран та лайăхрах пĕлсе тăратăн.
Кăшт йăнăшсассăн, ăшшăн ăс паратăн,
Вара манмастăп эс вĕрентнине.

Санра мĕн чул вăй-хал—пит тĕлĕнетĕп,
Пиллерĕн эсĕ пурнăç улт çынна.
Килсе çӳреççĕ пурте сан патна,
Шăп çавăнпа: «Эп пит телейлĕ»,—тетĕн.

Сана пуринщĕн те эп тав тăватăп,
Ху сывлăхна, ху сывлăхна упра.
Ĕçпе тинех ан хуçăл ватлăхра.
Кунçулунта телей кăна сунатăп.

II

Паян, аннеçĕм, çитмĕл çул тултартăн,
Мĕн пек илемлĕ эс уявунта.
Çулу-йĕрӳ хĕн-хурлă пулнă, тарлă,
Пурне те чăтнă ху пурнăçунта.

Ларатăн эсĕ чыслăн, сумлăн, лăпкăн
Ачусемпе тулли кĕрекере.
Анчах аса илетĕн халĕ шăппăн
Нушаланса ӳстернине пире.

Эс вăрçă асапне те, выçлăха та
Тӳссе ирттернĕ халăхпа пĕрле.
Çут классенче вĕренеймен, çапах та
Ялтранă пурпĕр умăнта тĕллев:

«Атьсем ăс пухчăр, аталанччăр, ӳсчĕр.
Вĕсем маттур пулсан, мана аван».
Ĕмĕтленни сан çитрĕ: ăшшăн, туслăн
Халь улттăн тан пăхатпăр куçунтан.

Сан ачусем халь ĕнтĕ çунат сарнă,
Ҫашнин шăпи телейлĕ те аван.
Пурнаççĕ пурте шăкăл-шăкăл, савăк.
Ҫашнин çемье, мăнукусем патвар.

Уяв курки çĕкленĕ майăн пурте
Сана ыр сывлăхпа телей сунар.
Пĕр чирлемесĕр эс, тăванăм, пурăн,
Пул яланах паянхи пек хастар!

30151 - чув.
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

* * *

Кун пек хумхану чунăмра ман пулман
(Кăна ашшĕ-амăш туять пит аван).
Ача пек сикетĕп, кулатăп чунтан:
Атте паянтан эп, атте—паянтан!

Кашни саламлать те ыйтать кăмăлтан:
«Епле арăму? Ывăлу-и патвар?»
Эп хирĕç калатăп: «Аван, пит аван,
Ятне çеç загсра халлĕхе çыртарман!»

УН ПУРНĂÇĔ ТЕЛЕЙЛĔ ПУЛТĂР

Хĕвеллĕ кун çуралчĕ ывăл,
Ачаш, илемлĕ ун кулли.
Шутлатпăр иккĕн: ӳстĕр сывă—
Ку пирĕншĕн халь чи хакли.

Шутлатпăр иккĕн: ӳстĕр хăвăрт,
Телейлĕ пултăр пирĕн пек.
Кунçулĕ ун ан пултăр йывăр.
Вăл куртăр шав кăвак тӳпе.

Ман ывăл халĕ сăпкара-ха,
Хăш чух йĕрет, хăш чух кулать.
Ӳсет те вăй илет вăраххăн,
Пире кăна сăнать, паллать.

Васкавлă вăхăчĕ иртӳçĕн
Анланĕ пурнăç мĕнлине.
Ан пултăр çеç вăл унщăн йӳçĕ,
Ан килтĕр хурлăх ун килне.

Анланĕ вăл тӳлек кунсемшĕн
Аслашшĕсем кĕрешнине.
Çак тăнăç пурнăçшăн, телейшĕн
Этем нумай юн тăкнине.

Хĕвеллĕ кун çуралчĕ ывăл;
Ачаш, илемлĕ ун кулли.
Шутлатпăр эпĕр: ӳстĕр сывă—
Çын пултăр, çакă—чи хакли.

УТАТПĂР ИККĔН...

Утма вĕреннĕ ывăлпа
Тӳрем çулпа хире тухатпăр.
Тавралăха савса сăнатпăр
Хăпартланулла кăмăлпа.

Пире хĕвел те ачашланăн,
Анне алли пек çупăрлать.
Хирпе пымашкăн ырă, лайăх,
Ҫашни сас-чӳ чуна лăпкать:

Ҫӳл тӳпери тăри шăнкравĕ,
Тĕкĕлтура сасси, ташши,
Таçтан килен машина шавĕ,
Е клеверăн пыл пек шăрши.

Ҫунта хĕвел те ăшăрах,
Йӳç тĕтĕмĕ, чăнах та, тутлă.
Ҫашни сăнарĕ асăмра,
Ялйышăмпа ман çирĕп туслăх.

Шăп çавăнпа ялан килеттĕм
Тăван яла çулсеренех.
Тус-тантăшсен ĕçĕсене
Савса пăхаттăм, киленеттĕм.

Кăçал, ак, пĕчĕк ывăлпа
Ҫуралнă енĕме сăнатăп,
Тин çеç вăраннă туйăмпа
Сисмесĕр шухăша путатăп:

Тахçан, эп пĕчĕккĕ чухне,
Атте манпа пĕрле утатчĕ,
Хисеплеме хресчен ĕçне,
Тăван хире савма хушатчĕ.

Унтанпала чылай хутчен
Ялйыш кунта тырпул пуçтарчĕ.
Тавралăх улшăнчĕ хуллен,
Çынсен кунçулĕ çăмăлланчĕ.

Тинех эп хам та ача мар:
Тăнлав кăвакара пуçларĕ.
Ӳсет, ак ывăлăм хастар,
Кĕç парта хушшине те ларĕ.

Çулсем хыçа ăсаннăçем
Атте ятне те вăл час илтĕ.
Кунта килсе çӳренĕçем
Ун чух мана, тен, аса илĕ...

Утма вĕреннĕ ывăлпа
Тӳрем çулпа хуллен пыратпăр,
Тавралăха савса сăнатпăр
Хăпартлануллă кăмăлпа.

* * *

Кашни кунах, ялан савăнтаратăн,
Ытарайми тăван тавралăхăм, мана.
Сив хĕл çитсен, шап-шур пустав саратăн,
Çулла чечеклĕ çарану çĕклет чуна.

Ытарайми тăван тавралăхăм, мана
Нихçан, нихçан та эс йăлăхтармастăн.
Куç алчăрать, пĕрмай пăхса тăрсан сăнна,
Асамçă пек çиçетĕн эс хавассăн.

Сив хĕл çитсен, шап-шур пустав саратăн
Чĕнен пас ункисемлĕ лăпкă вăрмана.
Е, каç пулсассăн, уйăхна çакатăн,.
Çул кăтартса сапатăн йăлтăр çуттуна.

Çулла чечеклĕ çарану çĕклет чуна,
Кашни çынра ыр туйăм çурататăн,
Мухтатăп сан тӳлеклĕхне, ылмашăвна,
Эс вилĕмсĕр пулнишĕн савăнатăп.

ПĔРРЕМĔШ ЮР

Паян тинех ак улшăнчĕ çанталăк,
Шап-шурă тĕс çиçет йĕри-тавра.
Пĕрремĕш юр—чуна килен тасалăх
Йăлтăртатать кăшт уçăрах садра.

Ирпе хĕвелĕ вăтанса хăпарчĕ
Шур тум пĕркеннĕ çӳллĕ сăрт çине.
Ҫаланăн: ку вăл малтанхи хыпарçă,
Эппин, кĕтсемĕр хĕл кунĕсене.

ЫТКĂН-ЫТКĂН, ЙĔЛМЕ ЙĔЛТĔР

Мамăк евĕр вĕлтĕр-вĕлтĕр
Шур юр çурĕ çĕрĕпе...
Ыткăн-ыткăн, йĕлме йĕлтĕр,
Ирхи янкăр уй-хирпе.

Ҫил ачи манпа çӳресшĕн,
Алхассах чĕрре кĕрет.
Ҫăлăхах çула пӳлесшĕн,
Вĕт юрпа питрен перет.

Шур пуставлă уй-хир урлă
Икĕ йĕр хыçа юлать.
Йĕлме йĕлтĕрĕм хăюллă,
Ҫилçунат пек ыткăнать!

ПИОНЕРСЕН ЮРРИ

Ирпе путене авăтать-и,
Çил-тăвăл урать-и кăран—
Эпир малаллах çул тытатпăр,
Çунать сутă çăлтăр умра.

Ут тĕрĕс çулпа,
Тăван халăхпа.
Упра хăв чысна çамрăкла.

Эпир тăрăшса вĕренетпĕр,
Тăван çĕршыва юратса.
Ĕçе хăнăхса çитĕнетпĕр,
Чунра пысăк ĕмĕт тытса.

Утатпăр эпир тус-тăванлă,
Телей пире парти пиллет.
Ҫунçулăмăр ирĕк те анлă,
Малаваскатать çут тĕллев.

Ут тĕрĕс çулпа,
Тăван халăхпа.
Упра хăв чысна çамрăкла.

ХЁВЕЛ УРИ

Хаваслăн хирпеле утатăп,
Сăнатăп эпĕ тӳпене.
Сăнанăçемĕн мал енне,
Хĕвел ури унта куратăп.

Чăн-чăн илем! Куçа шартса
Хĕлхемĕсем çӳлте çиçеççĕ,
Шур пĕлĕт витĕрех анса,
Вăрман çине çитсе ӳкеççĕ.

Самантлăх шухăшсем çухалнăн,
Пытанчĕç çут пайăркасем.
Тăратăп эп, такам тухатнăн,
Çак илеме татах кĕтсе.

ÇУРХИ КĂМĂЛ

Тăри юрриллĕ савнă хирĕм,
Сан сарлака ытамунта
Хама туятăп эпĕ çирĕп,
Ҫанатăп ыррăн эп кунта.

Тӳпе—таса та çутă, ирĕк—
Ҫăвак шевлепеле ялтрать.
Ача пекех ачаш çу ирĕ!
Хĕвел çĕре савса лăпкать.

Мăнаçлă Атăл—çамрăк каччă—
Аякранах вăл курăнать.
Ун умĕнче колхозăн сачĕ
Туй тумĕ—шупăр—тăхăнать.

Тăри юррилле савнă хирĕм,
Сан сарлака ытамунта
Хавхаланатăп каç та ир эп.
Ҫĕн ĕмĕт çуралать кунта!

* * *

Ачаранах мăн çул енне
Аслисемпе эпир васканă.
«Вĕçертес марччĕ,—шухăшланă,—
Ӳссен шух ĕмĕт йĕвенне».

Шух ĕмĕт йĕвенне тытасшăн
Қашни этем çак çĕр çинче.
Тытма вăл çăмăл пек айваншăн,
Ӑслишĕн—кăткăс та инçе...

* * *

Тӳпе кăвак. Хĕвелĕ ывăнмасăр
Шевлепеле сăрлать пучахсене.
Утатăп сукмакпа пĕр чарăнмасăр,
Итлетĕп путене авăтнине.

Хум хыççăн хум шуса килет вăраххăн,
Йăлтăртатса илет тулли пучах,—
Қаласшăн пек мана: «Ĕçченĕм, савăн,
Эс тăрăшни пулмарĕ кăлăхах».

* * *

Хуракăшсем,
Эсир туятăр-ши—
Шух чунсенче
Мĕн чухлĕ тунсăх,
Çĕнĕ шухăшсем,
Эсир вĕçсе кайсан, юлаççĕ çĕр çинче?
Çавна пула пит канăçсăр çынсем.

Туман ĕçсем,
Арканнă ĕмĕтсем,
Манми туссем
Çак самантра тухаççĕ ман ума.
Сисместĕн те,
Ӳпкев кăшлать сана,
Е шанчăк çуттăн илĕртет
Татах мала утма,
Е ыр ĕçӳ лăплантарать чунна.

Хуракăшсем!
Сассăрсенче—
Такам пит хурланни.
Е вĕрентни пире шухăшлама.
Каятăр та—
Пуçлатпăр ăнланма:
Яр-уççăн курăнать—
Ĕç пуçланни, пуçланманни...

* * *

Сыв пул, манми ялйыш! Сыв пул, тăван кĕтес!
Хăçан-ши курнăçăп эп сирĕнпе тепре?
Пăлханчăк шухăша епле халь ман вĕçлес,
Çуралнă ен, хыçа тăрса юлсассăн эс.
Сыв пул, манми ялйыш! Сыв пул, тăван кĕтес!

Ялан асилĕп эп аннен ыр кăмăлне,
Тантăшсемпе пĕрле шкула çӳренине,
Çаран çинче путексем пек вылянине
Е вăрманта кăмпа, çырла татнисене...
Ялан асилĕп эп аннен ыр кăмăлне.

Илсе юлатăн эсĕ ман ачалăха,
Ытарайми кĕтес, мăнаçлă ытамна.
Çĕн ĕмĕтсем чĕнсе кайнишĕн хулана
Ӳпкелесе ан айăплаччĕ ывăлна:
Илсе юлатăн эсĕ ман ачалăха...

* * *

Йĕри-тавра халь ылтăн кĕркунне!
Çулталăкăн чечен саманчĕ.
Кăвар тăкма пуçларĕ вĕрене,
Кермен пек курăнать вăрманĕ.

Паян кунта çӳретĕп эп пĕччен,
Ума çу кунĕсем туха ççĕ шăппăн.
Тăраттăн эс çак хурăн çумĕнче,
Кăвак уçланкăна сăнаттăн лăпкăн.

Шеллетĕп темшĕн иртнĕ вăхăта,
Çак хурăна, пĕчченскерне, шеллетĕп.
Сана асилӳре куратăп та
Унччченхинчен те вăйлăн хĕмленетĕп...

* * *

Вăрман хуралчĕ. Инçетре çех чăрăш
Çу кунĕнчи пек симĕс курăнать:
«Эс чунупа нихçан ан ватăл, тăрăш»,—
Тесе мана каланăн туйăнать.

* * *

Сыв пул, сыв пул, çуралнă енĕм!—
Хыçра вĕлт-вĕлт юлаççĕ юпасем.
Уç варкăш, çĕнĕ юрă ĕнĕрленĕн,
Чунра тек вăратать ыр шухăшсем.

«Татах килсем эс, ывăлăм»,—тенĕн
Тăрса юлаççĕ ватă йăмрасем.
Ачалăх кунĕсем тинех вĕçленнĕ.
Умра çĕн ĕмĕтсем, çĕн туйăмсем.

Анчах юратнă килĕн ăшшине,
Атте-аннен чи ырă кăмăлне,
Аякра чух кăна сисетпĕр.

Вĕсем пекех эпир, тунсăхласа,
Çĕн тĕлпулу пулать тесе шанса,
Çав вăхăта татах кĕтетпĕр.

* * *

Август уйăхĕ тирпейлĕ,—
Кăмăллать лăпкăлăха.
Сахалрах тăкать хĕвелĕ
Вут-хĕмне тавралăха.

Вăрманта утма пит канлĕ
Çакă ырă вăхăтра.
Шухăш ирĕк, шухăш анлă
Пынă май уçланкăра.

Ăшă. Лăпкăлăх. Анчах та
Çул çинче сар çулçăсем
Пĕрмаях тĕлпулнăçем
Тунсăха путан вăраххăн.

* * *

Ытарайми илемлĕ ман çĕршывăм,
Ăна саватăп эп чунтан-вартан.
Кунта эп ӳснĕ те çĕкленнĕ сыввăн,
Телейĕме те тупнă çакăнта.

Историе аса илетпĕр халĕ:
Пит çăмăлах пулман утма пире,
Тӳсĕмлĕхре хăйне сыхланă халăх,
Туптаннă вĕрире те сивĕре.

«Вутра çунман, шывра путман»,—калаççĕ,
Сăмах пулсассăн паттăрсем çинчен.
Малта пыракана ялан хакласçĕ,
Çакна туйса тăратăп эп куллен.
Халăхпала кăна телей-хăват,
Эп унсăрăн—типсе хăран турат.

ДАГЕСТАН

Пӗлӗтсем айлӑмри тапӑра
Майӗпен-майӗпен пухӑнаççӗ.
Мӑн тусем шӑплӑхра, шухӑшра,
Улӑпсем пек мӑнаçлӑн тӑраççӗ.

Эп тӑратӑп çӳлтен сӑнаса:
Аялта шывсикки, урса кайнӑн,
Ыткӑнать, малалла васкаса,
Ӗмӗрхи чулсене хускатасшӑн.

Симӗс тумлӑ çаран, вӑрмансем,
Аулсем инçетре курӑнаççӗ.
Кукӑр-макӑр çулсем. Машинсем
Ту çине майӗпен хӑпараççӗ.

Ирӗке юратан Дагестан!
Эп сана çак сӑнсемшӗн юратрӑм.
Сан çинчен çӗнӗ юрӑ юрларӑм
Маншӑн эс тӑван пек пулнӑран.

ТИНĔСĔ

Шавла, шавла пĕр чарăнмасăр...
Хумсем, шав чупăр малалла.
Çак тинĕс пек ман чунăм харсăр,
Ялан ун евĕр пулмалла.

Хумхан, хумхан эс, аслă тинĕс,
Ҫисрентĕр çыр, ташлатăр чул.
Этем, кунта лăпланмăн тин эс,
Эппин, ыр ĕçшĕн çунтăр чун!

Шавла эс, тинĕс, чарăнмасăр...
Хумсем, хумсем, чĕвен тăрса,
Тем тĕрлĕ тĕслĕн ялтăрса,
Мала сулмаклăн ыткăнсамăр.

Хавхаланатăп, хумханатăп,
Сирĕнпеле эп ирĕкре!
Эй, тинĕс! Эсĕ—вăй-хăватăм,
Сан пек пăлхавлă ман чĕре.

* * *

Хумсем, пĕрне-пĕри тĕртсе,
Мала çĕмрен пек ыткăнаççĕ,
Е чашкăрса кăпăкланаççĕ,
Хăватлăн, шуххăн çĕкленсе.

Вĕсем ялан мала васкаççĕ,
Ҫăмăлласа чăрсăрлăха.
Е çырана пырса çапаççĕ
Сивленĕ май лăпкăлăха.

Урса кайсассăн, путараççĕ
Мăн карапа та авăра...
Е тепĕр чух, тӳлек кунра,
Сăпкари пек ярăнтараççĕ.

Ҫак шух хумсем чуна пит çывăх,
Хĕрӳ шухăшсемпе танах.
Вĕсем сĕнеç: нихçан ан ывăн,
Ялан кĕреш, пул вăйлăрах.

* * *

И вечный бой!
Покой нам только снится.

Александр Блок

Ялан, ялан кӗрешмелле!
Хӗрӳ чӗрешӗн канлӗх ют.
Мала кӑна чӗнет тӗллев,
Унта ҫитме вӑй пух та ут.

Лӑпкӑлӑхра йӑсӑрланни—
Асрах тыт!—вилнипе пӗр тан.
Ыраншӑн кӗрлесе ҫунни
Пире пӑрмасть тӗпри ҫултан.

Ҫӗршыв-анне хӗрӳ ӗҫре...
Эй! Ҡам хыҫра, часрах ҫӗклен!
Малашлӑхра кӗтет пире
Ӗҫри ҫитӗнӳпе телей!

* * *

Эп—чирлĕччĕ, эс шантараттăн
Мана часах сываласса.
Ҫуллен телей, вăй-хал сунса,
Сиплеттĕн ăшшăн, тараватлăн.

Сив шухăшсем манран таратчĕҫ
Сирме пĕр эс ҫеҫ пĕлнĕрен.
Чĕремĕрсем хĕрӳн тапатчĕҫ
Ĕмĕтсене ĕненнĕрен.

Сывалтăм эп, ак халь ҫӳретпĕр
Ҫаҫхи хула урамĕнче,
Умра—ҫĕн пурнăҫ—ĕненетпĕр—
Умра—телейлĕ ыр тĕнче.

* * *

Эс пур чухне кăна ман пӳлĕм ҫутă.
Ҫĕтетĕп, тунсăхпа хуҫăлнăскер.
Тăватăп эпĕ утăм хыҫҫăн утăм,
Иртет минут та пĕр сехет пекех.

Ҫилетĕн те каятăн, сивĕ тунсăх
Татах, татах чунра хуҫаланать:
Эс пурччĕ те—чĕре юрлатчĕ, тусăм,
Эс ҫук—хаваслăх хăвăрт ҫухалать.

* * *

Аттене

Пӳрт умӗнче эс лартнӑ йӑмрасем.
Çурт çумӗнче эс чӗртнӗ хӯхӗм сад.
Ялан кӗтеççӗ пек эс килессе,
Калаççӗ пек: «Аçу кӗç таврӑнать».

Пӑхаттир пек çӳреттӗн-çке, атте,
Виç вӑрçӑ витӗр тухнӑ ветеран.
Пире пит тараватчӗ çак кӗтес,
Эс чӗрӗ чух пӗрле пуçтарӑнсан.

Карап пек туйӑнатчӗ пирӗн çурт,
Ун пуçӗнче тӑраттӑн-çке ялан.
Кунçулунта чылай тӗл пултӑн хур,
Анчах нихçан та эс пуçна усман.

Тулличчӗ пирӗн кил, вӑл халь пушах,
Йӑмра кашлавӗ янӑрать пуçра.
Крыльца çинче çеç, ав, ларать кушак,
Сан ачусем халь пурте хулара.

Пӳрт умӗнче эс лартнӑ йӑмрасем,
Çурт çумӗнче эс чӗртнӗ хӯхӗм сад,
Ялан кӗтеççӗ пек эс килессе,
Калаççӗ пек: «Аçу кӗç таврӑнать».

* * *

Тин чӗрӗлен ҫанталӑк сӑнӗпе—
Ҫуркуннепе—сана танлаштаратӑп,
Сӑн-сӑпатна хӑпартланса сӑнатӑп,
Илӗртнӗрен таса илемӗпе.

Санра лайӑххине кӑна куратӑп,
Туйса тӑратӑп яланах ӑсна.
Ыр кӑмӑлна мухтатӑп та шанатӑп
Ҫирек хӑҫан пулӑшасса мана.

Кунҫул таппи, ун иксӗлми хавалӗ,
Телейӗм те санра ҫеҫ упранать.
Ҫул иртнӗҫемӗн ытларах саватӑп,
Чӗре сана, сана ҫеҫ йышӑнать.

* * *

Ыр çын вилсен, ыр ят юлать, тесе
Каланă авалах ман халăх.
Пурнăçунта курас килсен хисеп—
Ĕçӳ сан пултăр савăнмалăх.

* * *

Юратнă ял енне ал султăм,
Вăл юлчĕ тунсăхлăн хыçра.
Манпа пырсассăн çеç эс, тусăм,
Телейĕм пулĕччĕ умра.

Хыçра юлаççĕ питĕ хăвăрт
Чипер садсем, тăван уйсем...
Анчах чуна паян пит тăвăр.
Эсир ăçта-ши, ыр кунсем?

Шăнтса тăрать чуна сив хурлăх.
Савниçĕм, мĕншĕн пăрăнан?
Телей санра! Санра ман ырлăх!
Эппин, мĕскершĕн çухалан?..

* * *

Ик чун пӗрне-пӗри савать пулсассӑн,
Иккӗленмесӗр пӑрӑн вӗсенчен,
Ху кӑмӑллана хӗршӗн ҫеҫ эс савӑн,
Ун телейне, юратӑвне ӗнен.

Паллах, чуну сан хӑш чухне ыратӗ
Асаилӳн хӗрӳ ытамӗнче.
Хӑвна ӑнланакан ҫынна шыра эс,
Шыра: вӑл пур, вӑл пур ҫак ҫӗр ҫинче!

* * *

Хальччен ик ӑс ҫӗкленӗ кермене
(Ҫич ют сӑмаххине ӗненнӗрен-ши?)
Шухӑшламасӑрах эс ҫӗмӗресшӗн,
Пӗччен тупасшӑн пек хӑв телейне.

Иккӗленӳ амаланать пулсан,
Пӗр пытармасӑр пӗлтерсем, тархасшӑн.
Ҫур сӑмахран мана эс ӑнлансан,
Пуласлӑх ырӑ пулӗ, тусӑм, саншӑн.

Асил эпир паллашнӑ ҫут куна,
Асил пӗрле ҫӳренине хавассӑн.
Кичем чухне те ан сывлаччӗ ассӑн,
Упраччӗ шанчӑкна, юратӑвна.

Вара эс элеке нихҫан ӗненмӗн,
Манпа пӗрле чӑрмавсене ҫӗнтерӗн.

* * *

Ҫĕтмен инкек пĕрре те шеллемесĕр
Сан черченкке чунна амантнăран,
Ҫӳреннĕскер, пурнатăн ĕненмесĕр—
Начаррине кăна умра куран.

Ҫаччăсене ӳпкелесе хурлатăн,
Шанмастăн темшĕн ҫирĕп туслăха.
Пĕчченлĕхе кăна эс кăмăллатăн,
Итлес теместĕн ырă сăмаха.

Сив хĕл те шăп ҫапла: хуҫалансассăн,
Ҫуркуннене кайран парăнатех,—
Хăв шухăшна йăлтах улăштарсассăн,
Чун ыратни, сисетĕп, иртетех.

Пĕлетĕн-и, пулсассăн ĕненӳ—
Вăйне ҫухатĕ хăвăрт кӳренӳ.

* * *

Хăш чух тивĕçлипе, чунпа туймастпăр
Этем ĕçне, ун ырă тĕллевне.
Пулăшас чух часрах ура хуратпăр,
Çапла тататпăр çыннăн ĕмĕтне.

Çук, çăмăл мар, пĕрре те çăмăл мар,
Тус тенĕ çын та сĕнмесессĕн алă.
Шăп çакăн пек пулать хăш чух çанталăк:
Пĕрре аçа çапать, тепре уяр...

* * *

Пĕлтер—ўкĕтлесе ыйтатăп—
Туйăмсемпе эс выльăн хăçанччен?
Ман чун çунать—кăвайт хуратăн—
Ун ăшшипе эс ăшăнатăн, тен?

Амаланать санра—туятăп—
Кăшт тĕлкĕшсе, анчах та ерипен
Çут пайăрка,
Сивве сирсе хуллен,
Шырать пек вăл хĕрўллĕ тантăш.

Эппин, выля, выля эс вутпала,
Пĕрлештĕр ик кăвайт хĕрўллĕн—
Вăл çунтăрччĕ çап-çуттăн, çўллĕн,
Ан сўнтĕр, ăшăттăр пире ялан!

* * *

Сана пула ман савăнăç çухалчĕ,
Ăна тинех чĕнместĕп йăлăнса.
Чĕрем те кайăк чĕппилле шуйханчĕ—
Пурнать вăл ирĕке кăмăлласа.
Пĕлсем эс, саншăн паянтан эп ют—
Ырри те, усалли те йăлт вĕçленнĕ,
Чееленсе ан тилмĕр тепĕр хут,
Ĕлĕкхилле айваннăн тек хĕмленмĕп.
Ултав çăмхин те вĕçĕ пур, сӳтсен...
Унпа пĕрле эс çыхланса тăллантăн.
Мĕнех эп тăвăп, юрату сӳнсен,
Ăна малтан эс кăшт та хакламарăн.
Вĕçлентĕр терт, çитет асапланса,
Суя телей кĕленче пек йăлт ваннă.
Чĕрем ман кайăк чĕппилле шуйханнă,
Çунать вăл ирĕке кăмăлласа.

. . . . . .

* * *

Аллу чĕтрерĕ... Темшĕн эс пăлхантăн,
Анчах та пăрăнтăн манран.
Вăл каçранпа çул хыççăн çул ăсанчĕ,
Çапах та халь те эс асра.

Эп юрататтăм, эс çакна сисеттĕн.
Эппин, пит шăппăн, хурланса,
Мĕскершĕн кайрăн уйрăлса?
Пĕртен-пĕр çутă шанчăка пĕтертĕн.
Телейсĕр эп... Телейлĕ-ши халь эсĕ?
Çакна кăна пулин те ман пĕлесчĕ...

. . . . . .

ТУПМАЛЛИ

«Пурнатпăр ирĕк çĕршывра телейлĕн...» . 3
«Ҫашни пĕлет аван...» 4
«Ытарайми...» 5
«Пĕлтер, этем....» 6
«Тĕллев!..» 7
«Ирсерен кама кĕтетĕн эс, йăмра...» . . —
«Çын тӳснисем ума тухаççĕ...» 8
«Телей вăл чĕрĕлĕх кăна...» 10
«Этемлĕх ялан...» 11
«Выртакана çапма хушмаççĕ...» . . . 12
«Çынсем...» 13
«Çывăххине, инçетрине те...» 14
Тухтăрсене 15
Аннене 16
«Ҫун пек хумхану...» 18
Ун пурнăçĕ телейлĕ пултăр 19
Утатпăр иккĕн 20
«Ҫашни кунах...» 22
Пĕрремĕш юр 23
Ыткăн-ыткăн, йĕлме йĕлтĕр . . . . . —
Пионерсен юрри 24
Хĕвел ури 25
Çурхи кăмăл 26
«Ачаранах мăн çул енне...» 27

«Тӳпе кӑвак...» 27
«Хуракӑшсем...» 28
«Сыв пул, манми ялӑйыш...» 29
«Йӗри-тавра халь...» 30
«Вӑрман хуралчӗ...» 31
«Сыв пул, сыв пул...» . . . . —
«Август уйӑхӗ тирпейлӗ...» 32
«Ытарайми илемлӗ ман ҫӗршывӑм...» . . 33
Дагестан 34
Тинӗсе 35
«Хумсем...» 36
«Ялан, ялан кӗрешмелле...» 37
«Эп—чирлӗччӗ...» 38
«Эс пур чухне кӑна ман пӳлӗм...» . . . . —
«Пӳрт умӗнче...» 39
«Тин чӗрӗлен ҫанталӑк...» 40
«Ыр ҫын вилсен...» 41
«Юратнӑ ял енне ал султӑм...» . . . . —
«Ик чун пӗрне-пӗри савать...» 42
«Хальччен ик ӑс...» . . . . —
«Ҫӗтмен инкек пӗрре те...» 43
«Хӑш чух тивӗҫлипе...» 44
«Пӗлтер...» . . . . —
«Сана пула ман савӑнӑҫ ҫухалчӗ...» . . . 45
«Аллу чӗтрерӗ...» . . . . —

Для старшего школьного возраста

Николай Константинович Кушманов

В ОБЪЯТИЯХ ЖИЗНИ

Стихи

На чувашском языке

Редактор *П. Е. Димитриев*
Художник *З. И. Чернова*
Художественный редактор *Г. С. Самсонова*
Технический редактор *Н. В. Васильева*
Корректор *Н. П. Печникова*

ИБ 1921

Сдано в набор 29.07.86. Подписано к печати 23.02.87. НТ 13133. Формат 70×90$^1/_{32}$. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 1,75. Усл. кр.-отт. 1,87. Учетно-изд. л. 1,18. Тираж 1000 экз. Заказ × 2808. Изд. № 81. Цена 5 коп.

Чувашское книжное издательство
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

5 пус

Николай Кушманов (Кушманов Николай Константинович) 1949-мĕш çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Патăръел районĕнчи Турхан ялĕнче çуралнă. Турханти вăтам шкулта вĕреннĕ. Совет Çарĕнче службăра пулнă. Шупашкарти строительство техникумĕнчен, Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Хальхи вăхăтра вăл «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнче ĕçлет.

Николай Кушмановăн малтанхи сăввисем Патăръел районĕнчи «Авангард» хаçатра кун çути курнă.